Шкулсенчен хыпарлаççĕ

Салтак пăтти çисе курмаллах

Акă чăн-чăн арçынсен уявĕ те иртрĕ. Кирлех вĕсем, чăн-чăн арçынсем. Вĕсем пулмасан пирĕн çĕршыва, пире тăшмансенчен кам хўтĕлĕ-ха?

Манăн асатте, вăрçă ветеранĕ, пурăннă чух час-часах çапла калатчĕ: «Ĕлĕк салтак кайман каччăна ялта çын вырăнне хуман. Салтака кайса курман çын пурнăç тути-масине те пĕлмест вăл». Çавăнпа салтак пăттине тутанса курманнисем те вăл вăхăтра питĕ сайра пулнă.

Халĕ ўкерчĕк урăхларах. Паянхи кун салтак кайманнисен тата каяс килменнисен ыйшĕ пысăклансах пырать. Çара кайса килнĕ яшсене кайманнисемпе танлаштаратăн та – уйрăмлăхĕ палăрмаллах сисĕнет. Пĕрремĕшĕсем кăмăлĕпе те, кĕлеткипе те çирĕпленнĕ ĕнтĕ, пурнăçра хурипе шуррине те уйăрма аван пĕлеççĕ. Мĕнре-ши вара салтак кайманнин сăлтавĕ? Çĕршыври ларутăру лăпкă марри, салтакра «асаттесем» хĕнени те хăратать пулас хальхи каччăсене. Ĕлĕкхи пек 25 çул çар хĕсметĕнче тăмалла пулсан вара паян пĕр каччă та салтак кайман пулĕччĕ. «Пуринчен те хăракан хăй килĕнче ларакан» тенĕ мар-и-ха ваттисем?

Эпĕ хам вĕренекен шкулта «Çара каяс килет-и?» ыйтăм ирттертĕм. Чылайăшĕ «çапла» тесе хуравларĕ: 90 процентран та иртрĕ. Ыттисен вара 18 çула çитиччен шутламалăх та, хăйсене салтак пулма хатĕрлемелĕх те шкулта условисем çителĕклĕ. Физкультура урокĕсенче ачасем сывлăха çирĕплетеççĕ пулсан, ОБЖ урокĕсенче салтак пулмах хатĕрленеççĕ теес килет. Пĕлтĕр шкулта Совет Союзĕн Геройĕ Г. Алексеев ячĕллĕ çарпа патриот клубĕ те уçалчĕ. Çакă мал туртăмлă çамрăксене пĕрле пуçтарма май пачĕ.

Пирĕн асаттесем вăрçăра пирĕн телейлĕ пуласлăхшăн пуçĕсене хунă. Хăйсен мăнукĕсем те çĕршывăн чăн-чăн хўтĕлевçисем пулса ўсессе шаннă, паллах. Пирĕн вĕсен шанăçне тўрре кăларасчĕ.

Наталия СКВОРЦОВА.
Чуманкассинчи вăтам шкул.

Чечен вăрçинче писĕхнисем

Çитĕнекен ăрава патриотла воспитани парасси тĕп тĕллев пулса тăрать. Çавăнпах шкулсенче иртекен оборонăллă- массăллă ĕç тата спорт уйăхлăхĕсене учительсем вĕренекенсене уйрăмах активлă явăçтараççĕ. Ĕç туллинрех те интереслĕрех ирттĕр тесе вара вăрçă ветеранĕсене, Афган тата Чечен çĕрĕсем çинчи çапăçусене хутшăннă ентешсене тĕл пулусене хутшăнма чĕнеççĕ.

Акă çак уйăхлăх вăхăтĕнче Ильинкăри вăтам шкулта та паттăрлăх урокĕсем иртрĕç. Çурçĕр Кавказри операцисене хутшăнма тўр килнĕ А.В. Черновпа П.Е. Лоцманов ачасемпе тĕл пулса хĕрў вырăнсенчи хăйсен пурнăç тапхăрĕпе паллаштарчĕç. Туллă-сăртлă, тўрем вырăнсенчи çапăçусене хутшăнни, юлташĕсене çухатни, аманни – паян та пĕтĕмпех куç умĕнче вĕсен. Вăхăт иртет пулин те, астăвăм вăйĕ пысăк.

Спортпа туслашма, йывăрлăхсене тўссе ирттерме, вĕсене çĕнтерме чĕнсе каларĕç çĕршыв хўтĕлевçисем паян партăсем хушшинче ларакан яшкĕрĕме. Мĕншĕн тесен малаллахи пурнăçра çакă кашни утăмрах пулăшатьçке. Çар пурнăçĕн тутти-масине активсе пăхасси вара – чăн-чăн каччăн тивĕçĕ. Çĕршыв хўтĕлевçи пулма сумлă та кăмăллă.

И. КАРГИН.

Малалла – çырусен йĕрĕпе

Тепĕр çыру та Ильинка шкулĕнченех çитрĕ. Çырура А. Иванова хăйсен шкулĕнче ашшĕ-амăшĕсем тата ачасем хутшăннипе «Атте, анне тата эпĕ – спортпа туслă çемье» хаваслă спорт эстафети иртнине пĕлтерет. 3 командăра кашнинчех 6 ашшĕ-амăшĕ тата 6 ача пулнă. Интереслĕ конкурссенче «Виктория» команда çĕнтернĕ.

Атапайсем вара Вĕрентекен çулталăкне епле пуçлани çинчен пĕлтереççĕ. Волейболла выляма хăнана Тойкилтĕсене, Сосновкăсене, Шурчасене тата Москакассисене чĕннине çырса хыпарларĕ А. Иванова аслă вожатăй. Нумаях пулмасть Атапай шкулĕнче ĕçлекенсем хăйсем Калайкасси шкулне çитсе килнĕ. Спорт вăйăисене хутшăнса хавас кăмăлпа таврăннă каялла. Хăйсене пулăшу панăшăн учительсем А. Садовникова тав тăваççĕ.

Редакцин социаллă пурнăç пайĕ.

Çулталăка хавас пуçларăмăр

Шурча шкул коллективĕ пурнăçпа тан утма тăрăшать. Районта, республикăра ирттерекен конкурссенчен пăрăнмасть. Ахальтен мар ĕнтĕ иртнĕ вĕренӳ çулĕн пĕтĕмлетĕвĕсемпе районти тĕп шкулсем хушшинче малти вырăна тухма пултарчĕ.

2010 çула та коллектив хавхаланса ĕçлес кăмăлпа кĕтсе илсе ăна çапла пуçларĕ те. Вĕрентекен çулталăкне халлланă спорт вăйăисен ăмăртăвне ирттерчĕç Шурчасем. Шомик тата Кашмаш шкулĕсен коллективĕсем палăртнă кун хăнана çитрĕç. Шкулти историпе краеведени музейĕнче пулса курчĕç ĕçтешсем, шашка-шахмат, теннис тата волейбол вăйăисенче вăй виçрĕç. Чи пултаруллисем Кашмашсем пулчĕç. Асăнмалăх парнесене вара пурте тивĕçрĕç.

Вĕрентекен çулталăкне сывă пурнăç йĕркипе çыхăнтарса малалла та çакăн пек тĕл пулусене йĕркелеме калаçса татăлчĕç.

Н. ТЮРИНА,
чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен.

Пĕчĕк туссене пулăшатпăр

Хĕллехи çанталăк илемлĕ пулин те, пирĕн тăрăхра хĕл каçакан кайăксене пĕрре те шеллемест. Вĕсем сивĕ çанталăкра апатсăр пурăнайманнине эпир аван пĕлетпĕр. Çавăнпа та эпир шкулта «Хĕллехи тĕпел» акци ирттертĕмĕр.

Кашни вĕренекен кайăксене валли сырăш хатĕрлерĕ. Вĕсене йывăçран, картунран тата ытти тĕрлĕ материалсенчен ăсталарĕç ачасем. Сырăшсене шкул умĕнчи йывăççем çине çакса вĕсем ăшне çăкăр тĕпренчĕкĕсем, кĕрпе, тĕрлĕ вăрă, тырă пĕрчисем хурса патăмăр. Хĕрлĕ пĕсехеллĕ илемлĕ уйăпсем, кăсăясем, çерçисем савăнсах пирĕн кучченеççене çирĕç.

Сырăшсем пушă тăмаççĕ. Кайăксем вĕççе килни вара – пирĕншĕн пуриншĕн те чи пысăк парне.

Анастасия ЕРДУКОВА, Шурча шкулĕнче 9 класра вĕренекен.

Ветерансем сахаллансах пыраççĕ...

Нарăсăн 2-мĕшĕнче пирĕн шкула вăрçă ветеранĕ Федор Васильевич Савельев килчĕ. Вăл питĕ ватă, çавăнпах нумай пĕлет. Шурча ялĕнче пурăнакан ветеран пире иртнĕ хаяр вăрçă саманчĕсемпе паллаштарчĕ, ăçта тата епле çапăçнине каласа пачĕ. Федор Васильевич «Герой» колхозран миçе çын вăрçа кайнине, миçе çын пуç хунине тата киле таврăннисем пирки те асăнмасăр хăвармарĕ. Вăл пĕр тетрадь илсе килнĕччĕ. Унта вăл темĕн те çырнă. Вăрçăра пулнă çынсен списокне часах шкулти музея пичетлесе çакма килĕшрĕç тĕл пулура.

Пирĕн ялтан, Çĕньял Шурчаран, 33 çын вăрçа кайнă, тăххăрăн çеç киле таврăннă. Ыттисем вара пурте çапăçу хирĕсенче пуç хунă. Пирĕн тăвансем те – манăн асаттен пиччĕшĕсем – вăрçăран таврăнайман.

Эпĕ вăрçăра пулнă çынсене питĕ шеллетĕп. Мĕн чуль хĕрарăм пĕччен тăрса юлнă. 12 çулхи арçын ачасем уйри ĕççене пурнăçланă, малалла пурăнма тăрăшнă...

Çĕнтерӳ кунне вара халĕ кашни çулах палăксем умĕнче паллă тăватпăр. Анчах ветерансем сахал юлаççĕ. Çапах эпир вĕсене манмастпăр, пулăшатпăр. Акă Шуркасси ялĕнчи Вениамин Иванович Иванов патне те çитес вăхăтрах çитесшĕн-ха эпир.

Ватă çынсене яланах хисеплесчĕ.

Анастасия ФЕДОРОВА,
6 класра вĕренекен.

Редакци почтинчен

Пĕрле чух хавас

Нарăс уйăхĕнче «Золушка» ача садĕнче пысăк уяв иртрĕ. «Атте, анне, эпĕ – туслă çемье» ăмăртăва хутшăнма ашшĕ-амăшĕсем йышлăн пухăнчĕç: Воробьевсем, Блиновсем, Котельниковсем, Казамбаевсем, Николаевсем, Смирновсем, Бочкинсем тата Артемьевсем. Тĕрлĕ енлĕ ăмăртăва пăхса киленнипе пĕрлех ачасен сăвви-юррине те итлеме кăмăллă пулчĕ. Пĕтĕмлетӳ тунă хыççăн командăсене ятарлă номинацисенче палăртрĕç.

Ăмăрту пурин кăмăлне те тивĕçтерчĕ. Çакăн пек туслă тата маттур çемьесем пулсан пирĕн пурнăç лайăхланасса шанас килет.

Н. ИВАНОВА, М. ВОРОБЬЕВА.

Шупашкарсенчен те кая мар

Çак кунсенче Кашмашри Культура çурчĕ çумĕнчи халăх театрĕ Очăкасси клубĕнче Н. Угарин çырнă «Çăлтăрсем вăйăа тухсан» произведени тăрăх хатĕрленĕ спектакль лартса пачĕ. Клуба халăх йышлă пухăнчĕ. Шупашкар артисчĕсенчен пĕрре те кая мар выляççĕ Кашмаш каччисемпе хĕрĕсем. Куракансен чунне витермелле сăнарсем калăплана вĕсем. Р. Николаева (Улькка), Н. Ершов (Çтаппан), Т. Ершова (Анна), П. Борзаев (Ваççа), В. Александров (Павлуш), Н. Ерзукова (Анюта), Е. Тихонова (Нина) вылянисем куракансен асăнче нумайлăхах асра юлĕç. Ĕç ветеранĕ Вячеслав Широков (Ваççа ашшĕ) спектакле хăйне евĕр илем кўчĕ. Халăх театрĕн артисчĕсене Очăкассисем тав туса малашнехи пултарулăхра ўсĕмсем сунчĕç.

Куракансен ячĕпе Фаина МАТВЕЕВА.

Тав тăватпăр

Шетмĕпуç ялĕнче пурăннă, 10 çул ытла Шетмĕпуçĕнчи клуб директорĕ пулса ĕçленĕ, пирĕнтен сарăмсăр уйăлса кайнă Валерий Семенович Никитина юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн йывăр хуйха пирĕнпе пайланăшăн Раççей Геройне Е.Г. Борисова, Муркаш район пуçлăхне Ю.А. Иванова, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхне А.Е. Андреевана, культура ĕçченĕсен районти профсоюз организацийĕн ертўçине Е.И. Налимована, районти библиотекăсен профком председательне Т.В. Павлована, Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека директорне Т.Е. Королькована, Шетмĕпуç ял администрацийĕн ертўçине Н.П. Александрова, Шетмĕпуçĕнчи тулли мар вăтам шкул директорне А.В. Степанована, шкул завхозне Л.И. Серафимована, шкулти поварсене Н. Филипповапа Н. Алексеевана, Шетмĕпуçĕнчи А.Е. Красновсен, В.В. Горбуновсен, О.В. Клементьевсен, А.А. Петровсен, В.А. Серафимовсен, Катăкуйĕнчи Н.В. Алексеевсен çемйисене, Шупашкарти О. Борисовпа Федорова, Карманкассинчи Александровсене, В.И. Павлов предпринимателе, унăн чи çывăх юлташĕсене Турхан ялĕнчи И.А. Димитриевпа Шетмĕпуçĕнчи Н.С. Павлова, пĕтĕм тăвансене, ял-йыша, çывăх çыннисене тата юлташĕсене чĕререн тав тăватпăр.

Мăшăрĕ Валентина, амăшĕ, йăмăкĕ хăйĕн çемйипе.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаю трехкомнатную квартиру в с. Б. Сундырь на 2/2 этаже пан. дома с индивидуальным отоплением, площадью 57 кв. м., с капитальным ремонтом всего дома или меняю на однокомнатную квартиру в г. Чебоксары. Тел.: 8-903-065-38-40. 2-2.

выдаем на выгодных условиях
ЗАЙМЫ
принимаем
СБЕРЕЖЕНИЯ
под достойные проценты
с.Моргауши, ул.Чапаева, 44а/2
6-23-10, 8 927 667-48-92
Св-во гос.рек. 21 № 001329502 от 26.05.04г.
КПКГ “КАПИТАЛ” работаем с пайщиками

Срочно продается двухкомнатная квартира старой планировки в центре с. Моргауши. 45,2 кв. м., 2-2 этаж, кирпичный дом. Документы для продажи готовы. Тел.: 8-927-85-42-997, 8-927-99-18-444. 4-4.

СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ «ТРИКОЛОР»
Каждому клиенту – подарок! 5-6.
Тел.: 8-906-385-29-30, 8-960-302-30-52.

Продается мелкий картофель. Тел.: 8-937-384-10-41. 3-3.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 2-5.

Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăхсем туянатăп. Тел.: 8-903-063-07-57. 2-2.

Продаем керамзитобетонные блоки от 26 руб. Весенние скидки. «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 1-5.

Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. Парковая, д. 5а, площадью 48,1 кв. м., остекленный балкон, имеется погреб. Тел.: 8-927-861-71-04.

Продаем: ячмень, пшеницу, овес. Покупаем бычков. Тел.: 8-906-381-95-03. 1-2.

ВНИМАНИЕ, ТОЛЬКО 1 ДЕНЬ!
5 марта с 9-00 час. до 18-00 час.
в РДК с. Моргауши состоится ярмарка-продажа ульяновской и белорусской обуви.
Праздничные скидки!

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070505:159, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:070505, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6008 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:0:296, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, для ведения прудового хозяйства, площадью 17980 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Участница долевой собственности Костина Мария Петровна, 16.07.1974 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кадикасы, ул. Пушкина, д. 26, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Кадикасинское, на территории землепользования ЗАО «Колос», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:072501 площадью 1,42 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Кадикасинского сельского поселения.
2. Костиной Марии Петровне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кадикасы, ул. Пушкина, д. 26.

Муркашри вăтам шкул коллективĕ кунта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Л.С. Игнатьеван амăшĕ
Елена Никоноровна ХОРАСЬКИНА
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе чĕререн хурланса пĕлтерет.

Муркашри лицей коллективĕ директорăн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумĕн В.С. Ивановăн амăшĕ
Елена Никоноровна ХОРАСЬКИНА
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии. Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 02.03.2010 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3980.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.